**Каҫ кулӗм. Виҫҫӗн**

*Аннене*

Виҫҫӗн ларнӑ та лараҫҫӗ
Пӗрене ҫинче –
Виҫӗ карчӑк, виҫӗ тантӑш,
Виҫҫӗш – виҫ тӗнче.

Чи малтан сӳтсе яваҫҫӗ
Ҫӗн хыпарсене:
Мӗтрисен ҫухалнӑ хурӗ
Иртнӗ каҫхине.

Вӗҫелис мӑнуклӑ пулнӑ,
Мӗн тери телей!
Ҫӗн мунча туса пӗтернӗ
Тимӗрҫ Ӗлӗксей.

Ҫӑвӗпе ҫумарӗ ҫумӑр,
Йывӑр ҫул кӑҫал.
Мӗн тӑвас тен – ҫӳл тӳпешӗн
Турӑ ҫеҫ – хуҫа.

Ҫӗршывра та йӗрке ҫук ав.
Тем лӑпӑртатаҫ...
Тиливисӑрпа кӑтартрӗҫ,
Ай тур-тур, ҫӗркаҫ.

Халь камсем пурнаҫҫӗ лайӑх?
Вӑрӑ-хурахсем.
Ҫӗршыва та сутса ярӗҫ
Чармасан мурсем.

Ав паян та параймарӗҫ
Пенси укҫине.
Мӗн ҫисе пурӑнмалла тет
Пирӗн малашне?

Хулара мӗнле пурнаҫ-ши?
Хуть эпир кунта
Юр-вартан та татӑлмастпӑр,
Аш та пур кӑштах.

Ахальтен куҫмаҫҫӗ пулӗ
Хуларан яла.

Пирĕн ял та хула пуле
Ерипен капла!

Чи пахи – ан тухтăр вăрçă.
Вăрçă тухмасан
Халăх çавăрĕ-ха сывлăш –
Хăй çине тăрсан.

Мĕн, эпир нуша курман-и?!
Курнă, курман мар!..
Тав Турра – татах та пур-ха
Кăмăл пурăнма!..

...Виççĕн ларнă та лараççĕ
Пĕрене çинче –
Виçĕ тантăш, виçĕ карчăк.
Виççĕш – пĕр тĕнче.

*Туркай, В. Каç кӳлĕм. Виççĕн / В. Туркай // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 574.*